# ВĔРЕÇĔЛЕН

Пуç тăрринче йывăç çулçисем çинчен çумăр тумламĕсем шăпăртатма пуçларĕç. Шăпăр-шăпăр, шăпăр-шăпăр, вĕçĕ-хĕррисĕр тăкăнать. Иăлăхтарса çитернĕ усăсăр ĕçс такам хушшше ирĕксĕрех тума тивнĕ пек, тахçанах шӳсе çитнĕ çĕре юлхавлăн, васкамасăр шăварать.

Вăрмаы хĕрринче, сарлака ватă юмансен турачĕсем айĕнче, тахăшĕ çумăртан пытанмалли çӳлĕк пекки тунă. Типĕ çатрака майлаштарса хунă, ун çине курăк сарнă. Темех мар пулин те, лăпкă çумăртан хӳтĕлет.

Акă çак çӳлĕк айне карçинккасем, витресем йăтнă виçĕ çын пырса тăчĕ. Кусем кăмпа пуçтаракансем.

— Каллех телей пулмарĕ,— терĕ ватă хĕрарăм.— Иккĕ кнлсе те çумăр айне пултăм. Ну, эсрел çанталăкĕ! Ни ĕçлеме, ни йĕркеллĕ канма памасть.

Çапла хăй тĕллĕн мăкăртатса, вăл йĕпеннĕ пиншакне хывса силлерĕ, ватăлнипе тĕссĕрленнĕ куçне хĕссе, хура куçлă сарă хĕр çине тинкерсе пăхрĕ.

— Эс хăш ялсем пултăн-çак? — ыйтрĕ хĕрарăм.— Кам-еей?.. Э-э, Антусь Микулайĕн-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп. Хăшĕ? Таня тетĕн? Леш инçутра вĕренекенни-и? Э-э, апла... Аннӳне салам кала. Варук аппаран те. Фермăра пăрусем пăхнă çĕртех ĕçлет те... Аннӳ пĕлет мана... Курсан, пнтĕ калаçатпăр... Ку акă Çтаппан Йăванч. Пĕр ялтаиах эпир,— сăмах ваклахма ӳркенмен хĕрарăм кăшт аяккарах чĕлĕм туртса таракан аллă çулсене çывхарнă вăйпитти арçын енне пуçне сулчĕ.— Трактăрпа ĕçлет те... Катăршнăй çумăрĕ памасть вĕт кăçал машинăна хире кĕме... Тата тепĕр çын килет. Кам-шн ку? Эсĕ палламастăн-и? — вĕçĕ-хĕррисĕр тăкать сăмахне Варук аппа.

— Пирĕн ялсем вăл. Николай Михайлович. Хуларан пиччĕшĕ патне отпуска кнлнĕ. Кӳршĕллех пурăнатпăр эпир,— кĕскен пĕлтерчĕ Такя.

— Э-э, леш Курак Мнхаля ывăлĕ-и? «-Пĕлетĕп, ара. Чăнах çав-иç! Курманни нумай пулать те, вăр-варах палласа илеймерĕм. Тухтăрччĕ пуль вăл?

— Ара. Профессор. Университетра вĕрентет,— килекен çын илтесрен, çурма сасăпа каларĕ хĕр.

— Э-э, апла. Инçут пĕтерсен, кӳршĕ районта чылай ĕç-лерĕ-ха вал. Хĕрĕм унта пурăннăран капкалаттăм та. Ах, юрататчĕç ăна! Питĕ лайăх сын тетчĕç.

Николай Михайлович, вăтам çулсепе çывхарнă патвар пӳллĕ, сарлака çамкаллă хура арçын, кӳршĕ ял çынни-сене алă тытсах саламларĕ.

— У-у, эс чылай пухнă-çке,— терĕ Варук аппа, лешĕ пырса тăнă-тăманах.— Ирех кнлтĕн-им?.. Пăхăр-ха, кам мскĕлтетет çавăита, Çăва ту çпнче? Çын кунталла утать мар-н? Хура кпремет тăвайккинчен аннă чухнех асăрха-рăм. Кам-ши ку? Мĕн тесе çумăр вптĕрех пылчăк çăрса çӳрет-ши?.. Сылтăмалла пăрăнчĕ. Района каякапскер пуле.

Аякри çынпа палласа илес пек, Варук аппа, алă тупан-не çамки тĕлне тытса, малалла тинкерсе пăхрĕ.

Умра унтан та, кунтан та темнее тип çырма ваклань тнкĕс мар уй-хир тăсăлса выртать. Талккпшпех пнçсе са-рăлнă ыраш пусси. Тырри, тулли. йывăр пучахĕсене çĕк-леймесĕр, аялалла усăннă. «Хăçан пуçтарĕç-ши пире?»—• тесе, тарăн шухăша кайнăн туйăнать. Тырă тунисем, пу-чахсем çине вĕтĕ шăрçа евĕр çутă çумăр пĕрчисем çакăн-нă. Шурăхнă хăмăл хушшинче тĕллĕн-тĕллĕн курăнакан кăн-кăвак утмăлтурат чечекĕсем кăна тĕксĕм тавралăха кăштах савăклатаççĕ.

— Çăва ту, Хура кпремет, Иĕрĕх çырми,— терĕ Таня, Варук аппа шăпланнипе усă курса.— Интереслĕ, мĕишĕн çавăн пек ят панă-ши çакăнти вырăнсепе?

— Çăва ту тени ĕнтĕ... Вал, эпĕ астăвасса, пĕчĕк ту пек çӳлелле мăкăрăлса ларатчĕ. Авалхи чăвашсен масарĕ пулнă çав вырăнта,— ăнлантарчĕ Варук аппа.— Хура ки-ремет çырми вăл усал вырăи. Хăратнă унта ĕлĕкрех. Ста-рик каласа паратчĕ... Çамрăк пулнă-ха вăл ун чух. Çĕрле таçтан таврăннă-çке утпа. Сиккнпе пыракан лаша Хура киремет кĕперĕ патне çитсен тăпах чарăнчĕ, тет, тем тусан та малалла каясшăн мар, тет...

— Вара? — хăлхнне чайках тăратрĕ çинçешке пӳллĕ çамрăк Таня.

— Туртса патăм, тет, вара пĕтсм вăйрап нухайккапа. Хайхи лаша кĕпер урлă вĕçнĕ пек снрпĕнсе каçрĕ, тет те, çӳллĕ тăвайккинчеп пĕр канмасăр сиккипе чупса хăпарчĕ, тет... Хура киремет çынпа та тытпă вăл.

— Епле тытиă? — каллех ыйтрĕ Таня.

•— Ну, чирлеттернĕ эппин... Пирĕн ял хĕрарăмĕ пĕрре-хинче алă çума аннă та çав çырма тĕпне ăнсăртраи та-

кăнса ӳкнĕ... Хсне кайса чутах вилетчĕ вĕт. Аран-арăн сывалчĕ... Хура киремет çавнашкал мыскарасем кăтартнние ёлĕк нумай калатчĕç...

— М-да! — терĕ Николай Михайлович, шухăша кайса.

— Нимĕн те çук унта,— сăмах хушрĕ Степан Иванович, çаплах чĕлĕмне мăкăрлантарса.— Эпĕ тракторпа та çĕрĕçĕрĕпе сухаланă, пĕччен те выртса çывăрнă. Мана никам та хăратман. Ни шуйттанне, ни туррине курман. Тĕшмĕш хĕрарăм сăмахĕ вăл. Пустуй халап.

Варук аппа кӳренчĕ пулĕ-и, хирĕç нпмĕн те шарламарĕ.

— Тата мĕн те пулин каласа парăр-ха, Варук аппа,— ыйтрĕ Таня.— Питĕ итлеме юрататăп эпĕ çавăн евĕрлĕ тĕлĕнмелле япаласем çинчсн. Ёлĕк тем тĕрлĕ усал-тĕсел: арçурисем, хĕртсуртсем, киреметсем нумай пулнă теççĕ.

— И-и, халь.хи çамрăксем ун пеккине ёненсççĕ-и?.. Вссемшĕн вăл шӳт туса кулмалли аичах,— терĕ хĕрарăм кăмăлсăртарах сасăпа.

— Вĕреçĕлен сличен каласа парас мар-и? — ыйтрĕ Николай Михайлович, Таня çине пăхса.— Темиçе çул каялла тел пулса çапăçма лекрĕ мапа çав усалпа.

Пурте ун çине тĕлĕнсе пăхрĕç.

— Ай, каласа парăр, Николай Михайлович, каласа парăр! — хавхаланчĕ Таня.

— Кай, мĕн вĕреçĕленĕ пултăр хальхи вăхăтра! Ёлĕк лулнă вĕсем. Халĕ пĕтнĕ, çук. Юпасем çние карса тухиă электрпца пралукĕ пĕтернĕ теççĕ вĕсене,— кулкаласа хирĕçлерĕ вата хĕрарăм. Хăй, итлеме хатĕрлепсе, хăлха урла çыхнă тутрине пушатрĕ те Николай Михайлович çывăхнерех пырса тăчĕ.

— Хама тел пулма тӳр килмен пулсан, эпĕ те ёненмĕттĕм,— пĕр кулмасăр каларĕ профессор.— Вунсакăр çул иртрĕ ёнтĕ унтаипа. Пĕр хĕре çулăхнă çав усал. Пайтах тĕрмешме лекрĕ çăлас тесе...

— Юмахри Иван-паттăр пек-и? — кулчĕ Степан Иванович.

— Ну... Иван-паттăр пекех мар пуле те... Сапах...— хăй çине çумăр шывĕ йăпăртатса аннине туйса, Николай Михайлович çӳлелле пăхса илчĕ те тепĕр вырăна куçрĕ.

— Ун чух эпĕ врача тин çеç вĕренсе тухнăччĕ-ха. Ялта ĕçлетĕп. Чирлисене йышăнатăп, больницăра пулатăп. Çав кун та сç яланхи пекех амбулаторинче пуçланчĕ. Кăнтăрла иртсен çынсем сахалланчĕç, коридорта шăв-ш^в лăпланчĕ. Акă алăк уçăлчĕ те, кабинета пĕр херараіп кĕче. Йăмăкне илсе килнĕ вăл. Лешĕ коридорта кĕтсе ларать. Аппăшĕ малтан манпа калаçса илесшĕн иккен.

— Итлетĕп сире,— тетĕп хайхискер çакна.

— Ыйхн çук, çывăрмасть. йĕрет. Вилесчĕ манăн тет,— хĕрарăм шывланнă куçне аллинчи пĕчĕк тутрипе шăлса тйпĕтрĕ.— Пулăшма пултараймăр-ши? Юлашки вăхăтра... мĕн,— пуçне чйксе, алăри тутрине йăвалама тытăнчĕ хĕрарăм.— Юлашки вăхăтра таврапа... Марине... мĕн... вĕреçĕленпе пурăнать тесе сăмах сарăлнă,— хумханнипе чыхăна-чыхăна аран-аран каларĕ вăл.— Эпĕ ăна-кăна нимĕн те пĕлмен. Малтан, паллах, ĕненмерĕм. Халĕ, акă, ыйтсан, хăй те тунмарĕ... Хальхн вăхăтра ун пеккине ĕнепме те йывăр ĕнтĕ. Анчах мĕн тăвăн?

— Миçе çулта йăмăку?

— Çнрĕм тăххăрта.

— Çемйи пур-н?

— Çук. Качча каяймарĕ çав. Вуппилĕк çулта чпр хыççăн хăлхасăр пулса юлчĕ те... Эпĕ хам çак ялтанах. Качча килнĕ кунта. Вĕсем аннепе вуникĕ çухрăмра пурăнатчĕç. Анне чĕрĕ чух чиперехчĕ...

— Нумай пулать-и аниў внлни?

— Внçĕ çул иртрĕ.

— йăмăку халĕ пĕчченсх пурăнать-и?

— Паллах. Унта пӳрт-çурт, пахча, хуçалăх... Сирĕнпе канашласа пăхас терĕм,— хĕрарăм каллех йывăррăн сывласа ячĕ те хуйхăллă куçĕпе умри кĕтеселле тинкерчĕ.

— Эх, шалккă хĕре! — терĕ Варук аппа, пуçне сулкаласа.— Пĕччен юлсан, хытă куляннă ĕнтĕ вăл. Щăп çавăн пек чух çулăхать теççĕ çав ăна, вĕреçĕлене. Пытарма юрамасть теççĕ ун пеккине. Çынсене калама вăтансан, вăрмана кайса, йывăççене те пулин кăшкăрса пĕлтермелле, теççĕ. Хăпать, тет, вара...

— Тăхта-ха, Варук инке,— чарчĕ ăна Степан Иванович.—Эсĕ каллех асаннееен çĕрнĕ юмахпе пакăлтатма тытăнтăн. Ан пӳл-ха, калама пар çынпа...

— Эсĕ, Çтаппан, ман çăвара ан хупла,— çнлленчĕ херарам.— Эсĕ çытмапа чуппă чухнех эпĕ качча капса ачапăчаллă пулнă. Кăштах иамăса пĕлесчĕ манпа, ватă çыппа, çапла калаçма. Пăх-ха, сăмах хушма памасть. Усал хуиеме пекех, лăркать те лăркать... Мĕн чаратăн эс мана? Санпа пуплеместĕп вĕт...

— Умра ларакан хĕрарăм сăмахĕсем мана çавăн чух тарăн шухăша ячĕç,— пуçланă калавне малалла тăсрĕ профессор.— Пĕр енчен илсеи, чирлĕ çынна пулăшу парассп, сиплессн, сывалма пулăшассп врач тивĕçĕ. Анчах эпĕ хирург. Пуç мпмипе çыхăииă чир-чĕрпе кĕрешме уйрăмман вĕрепмен. Пĕлсе, ăнăçлă сиплеме тытăнсан та, ĕçĕ

темнее уйăха тăсăлма пултарать. Кунта, ялта, ун пек чире сиплеме услови те çук. Çавăнпа та эпё пёр нккёленмесёрех: «Сирён урăх тухтăр патне каяс пулать»,— теме пултарнă. Анчах вăл вăхăтра çывăхра ун пек чнрпе ёçлекен специалистсем çукчё. Хёре те шел. Хуйхăрать, асапланать. Пулăшу памасан, ухмаха тухма та пултарать... Апла пулин те, çак кăткăс, йывăр чнрпе кёрешме хам çине плес тенё шухăш мана пăшăрхаптармарс кăна мар, хавхалантарчё те...

Николай Михайловича!! куçёнче кăмăллă кулă ялкăшса илчё те сўнчё.

— Эпё ялта ўснё,— терё вăл унччсихи пекех лăпкă сасăпа.— Хăратакан тёрлё усал-тёселсем çинчен те, хўреллё çăлтăр свёр çёрлехи пёлёт çийён вёçсе кăмака мăрйипчен кёрсе çухалакаи вёреçёле!1сем çинчеп каланине те пайтах илтнё. Халнччен вёсем маншăн пурте «тет» сăмахлă халлапсем кăначчё. «Çапла, тет», «çавăнта çапла пулнă, тет». Паллах, ёнснме йывăр ун евёрлё сăмахюмаха. Анчах нумайăшё авă, Таня евёр, итлеме юратаççё. Ёненмесеи те интереслё, чуна кăтăклать, тепёр чух шухăшлаттарать те...

Хальхинче вара çав халап хăйён яланхи тётренчёклё тумне хывса пăрахрё те ман ума пурнăçра тёл пулакан чăн-чăн япала пек тухса тăчё. Вёреçёлен çыпçăннă хёр кунта, коридорта, эпё чёнессе кётсе ларать... Çавăнпа ку мана питё интереслентерсе ячё. Чăнах та, мён вăл вёреçёлен? Халăх шухăш-кăмăлёнче çуралнă пустуй халап-и? Е чăннипех темле ăнланмалла мар вăрттăн вăй? Чир пулсан, ăçтан, мёншён, мёнрен пуçланать? Пуçра çавăн евёрлё тёрлё ыйту хёрарăма итленё чухнех çаврăнма пуçларё. Тёпчес, тёрёслес, пёлес килчё. «Ну, Николай Михайлович,— терём хама хам,— кун пек ăнăçу, тен, урăх нихăçан та тёл пулмё, çавăнпа ăна аларан вёçертме юрамасть. Паллах, çăмăл пулмасть. Тăшман усал, чее. Вăл çынна асаплантарать, сывлăха кăшлать, пётёмпех пётсрссшсн тёрмешет. Анчах хăйён хура ёçне вăл, наука ёненмен тсшмёш пёркенчёкёпе внтёнсе, куçа курăнмасăр, вăрттăп тăвать. Ана тытса арестлеймён, суда парса айăплама, тăрă шыв çине кăларма май çук. Апла пулин те, маншăн вăл чанчан преступник. Çавăнпа унпа тытăçса илмеллех. Кам кама çёнтерё».

Тимлесех итлекеи Варук аппа тем калама тăчё, çăварне те уçрё, анчах хуллен кăна ўсёрсе илчё те шарламарё. Калавçă янахё çине ларнă вăрăмтунана çапса вёлерчё те сăмахне каллех малалла тăсрё.

— Man умра çамрăк хер ларать. Амбулаторинче урăх пикам та сук. Чнрлисем кайса пĕтрĕç. Санитарка та тасатса тухса кайрĕ... Эпĕ пациентка çине вăрттăн сăнаса пăхатăп. Пнчĕ шуранка, анчах чипер, килĕшӳллĕ. Йăрăс пӳллĕ, пысăк хура куçлă. Чечеклĕ тутăрĕ айĕнчен яп-яка çамки çине кăтра çӳç пайăркисем усăннă. Лăпкă мар хăй. Пăлханать. Темрен хăрать, хутран-ситрен карт сикет, алăк çине шикленсе пăха-пăха илет... Ыйтатăп:

— Эсир мана илтетĕр-и?

— Çук. Анчах эпĕ тута çине пăхса ăнланатăп. Халлĕхе ерипентерех калăр çеç. Каярахпа хăнăхатăп акă.

Калаçиă май, сăмах йĕркине хама кирлĕ пек темĕп тĕрлĕ те çавăркаласа, пĕр-пĕр япала çинчен темиçе хут ыйтатăп. Чиперех калаçать. Асран тайăлнă çын темелле мар. Анчах вăтанать. Çавăнпа малтан асăрхаттарма шутлатăп.

— Инкекрен çăлăнас тесен, эпĕ хушнине пĕтĕмпех тумалла, ыйтнине тĕпĕ-йĕрĕпе, пĕр пытармасăр каласа памалла,— тетĕп 'çнрĕп сасăпа.—(Унсăрăн вăхăта пустуй нрттерни кăна пулать.

— Паллах. Анланатăп,— пусçне сулать Марине.

— Сире мĕн кансĕрлет?

— Эпĕ сасă илтетĕп.

— Мĕнле сасă?

— Арçын сасси.

— Хăйне те куратăр-и?

— Пĕрре те курман. Анчах пуррине туятăп,— Марине каллех алăк çине шиклĕн пăхса илчĕ.— Халĕ те кунтах вăл. Алăк хыçĕнче итлесе тăрать,— пăшăлтатрĕ вăл.

Эпĕ тĕшмĕш сын мар, апла пулин те, çакна илтсен, çанçурăм тăрăх спвĕ чупса кайрĕ.

— Аçтан пĕлетĕр вал кунтине?

— Туятăп. Вăл çывхарнине эпĕ яланах туятăп.

— Мĕнле майпа?

Хĕр, ăçтан пĕлем ăна тенĕ евĕр, хулпуççине хускатса илчĕ.

— Хăçантанпа илтĕнме тытăнчĕ снре çав сасă?

— Кĕçех виçĕ çул çитет.

— Мĕншĕн тӳрех тухтăрсем патне кайма шутламарăр?

— Хушмарĕ. «Никама та ман пирки шăл шурри ан кăтарт. Унсăрăн ӳкĕнмелле пулать»,— терĕ. Хăрарăм...

— Вăт-вăт,— васкасах сăмах хушрĕ Варук аппа, шывланнă куçпе шăлкаласа илсе.— Вĕреçĕлеи пĕлтерме хушмасть, тет, çав вăл хăй çинчен. Эпĕ илтнĕ ăна.

— Çапла пуле,— терĕ Николай Михайлович.— Анчах

ку çулталăк иртсен чармарĕ, тет. «Ёнтĕ пире инкам та уйăраймасть. Халĕ эсĕ ёмĕрлĕхех манăн»,— тесе каларĕ, тет.

— Ай-яй-яй! Пăх-ха эсĕ ăна,— аллине шарт сапрĕ Варук аппа.— Мĕнле, каларăм тет-и кама та пулин?

— Тантăшĕ пулнă унăн. Кӳршĕ хĕрарăмĕ. Çавна шанса каласа панă. Анчах çăвартан тухсан хапхана, теççĕ. Ят сарăлнă. Çынран çынна, килтен киле, ялтан яла... Çапла аппăшĕ патне çитнĕ.

— Усал хыпар утпа чупать, теççĕ çав,— хаш сывласа ячĕ Варук аппа.

— Маринене малтанхи кун нумай тытас темерĕм,— Николай Михайлович сарлака юман çумне таянчĕ.— Куратăп, йывăр ăна пачах палламан çынна (çамрăк арçынна тесен, тата та тĕрĕсрех пуле) мĕн пулни-иртни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пама.. Пăлханать, хĕрелет, ирĕксĕр калать, хăшпĕр чух ыйтсан та чĕнмест. Çавăнпа тек асаплантарас темерĕм. Чи малтан шанчăк парас пулать. Кăшт та пулин лăплантăр... Иртмен чир мар тетĕп, анчах врач тăрăшни сахал... Маринен хăйĕн çине тăни кирлĕ. Сиплессе вăраха тăсăлма пултарать. Çавăнпа чăтăмлăн кĕтес пулать, иккĕленме, кулянма кирлĕ мар. Врач хушнине пурне те вăхăтра туса пырсан, пĕр-икĕ эрнерен çăмăллăх пулатех... Унтан ыран хăш вăхăтра килмелли çинчен пĕлтерсе, çĕнĕ пациентка валли эмелсем илме рецепт çырма лартăм.

Тепĕр кунне каллех ĕнерхи евĕр калаçу пуçланчĕ.

— Мĕнле çывăртăр?

— Начар.

— Чылайранпа ыйхăсăр аптратăр-и?.. Мĕн пиркн?.. Мĕн кансĕрлет?..

Сасă канăç памасть иккен. Тепĕр чух çĕрĕпех пакăлтатать. Çывăрса кайсан та вăратать. Кунсăр пуçие, юлашки вăхăтра тĕрлĕ шухăш пуça пăтратать. Асаплантарса, хĕн кăтартса вĕлерет теççĕ те..; Апат анми пулчĕ...

— Кӳрентерет-и вăл сире?

Марине шухăша кайрĕ.

— Темле те пулать,— терĕ вăл вăрахран.— Хăш чух питĕ лайăх, кăмăллă. йăпатать, ачаш сăмахсем калать. Ёмĕрне те никамран та илтмен эпĕ çавăн пек илемле, чуна пырса тивекен сăмахсем... Пĕлтĕр хулана кайса килмелле пулчĕ. Хăратăп. Халиччен ннçта та тухса курман вёт. Тата хăлха илтмест. «Ан шиклен, Мариша, чиперех кайса килетпĕр. Эсĕ пĕччен мар, манпа. Тем-мсн пулас пулсан, систеретĕп»,— тет. Чăнах та. Пыратăп хула ура-

мĕпе. «Кăштах пăрăн. Хыçрă сылтăмра машина»,— теі. Пĕр-икĕ утăм аяккалла пусма ĕлкĕртĕм кăна, машина çумранах иртсе кайрĕ. Темĭçе хут та çапла асăрхаттарчĕ... Анчах пур чухне те ун пек мар çав... Тепĕр чух вăрçма тытăнать. Мĕн каламасть пуле. Итлеме памăс...

— Мĕишĕн вăрçать вара?

— Хăйпе хирĕçленппне юратмасть. Хушнине тумасан, çав тери çнлленет. Пăвать ун пек чух...

— Мĕнле майпа? Эснр уи аллисем мăГфан пăчăртанипс туятăр-и?

— Темле,— терĕ Марине кăштах шухăшланă хыççăп.—• Пыр питĕрĕеисе ларать. Сывлайми пулатăп.

Хуллен кулкаласа, Николай Михайлович итлесе тăракансем çине сăнаса пăхрĕ.

— Ĕненмен çыпшăи чăн-чăн юмах. Çапла вĕт? — ыйтрĕ вăл внтрппчи кăмппсеие çŭп-çапран пĕрерĕн-псрерĕн илсе тасатакап Степан Ивановпчрап.— Апчах авалтанпах халăх хушшинче çŭрекен сăмах-юмаха аса илсеп, чăппипех усал çулăхнă хĕрарăма.

Механизатор, пуçне сулкаласа, хуллен кулса илчĕ.

— Эсир пуш параппана çапса çŭрекен шăпăл-шапăл сын мар ĕнтĕ,— терĕ вăл.— Çапах ĕненме йывăр... Тен, хĕр суйнă сире?..

— Çу-ŭк! —{хирĕçлерĕ Николай Михайлович.— Мĕне кура? Сăлтавĕ çук апла хăтланма. Артист та мар вăл мана икĕ уйăх çавăн евĕр ăста улталама.

— Эй, тур-тур! Усал-тĕселрен турă сыхлатăрах. Хама та, ачасене те,— мăкăртатса илчĕ Варук аппа.

Çамки çине усăнса аннă çŭç пайăркине Николай Михайлович карттус айне пытарчĕ. Итлекенсем, вал малалла каласса кĕтсе, чĕнмерĕç.

— Час-часах хирĕлетĕр-и? — тесе ыйтатăп хĕртен.

— Пулкалать.

— Юлашки хирĕлŭ мĕн сăлтава пула сиксе тухрĕ?

— Ывăнтăм çавăн пек пурнăçпа,— терĕ Марине, пуçне хурлăхлăн усса.— Йăлăхтарса çитерчĕ. Пачах канлĕх çук. Вилем пĕрех хутчен тесе шутларăм. Пирĕн ял хыçĕнче Çавал юхать, инçех мар тарăн авăр пур. Унта выльăх та путать, шыва кĕрекен ачасем вилни те пулнă. Тухрăм килтен. Хуса çитрĕ. «Ан ăссăрлан. Çаврăн каялла»,—тет. Эпĕ итлеместĕп, малаллах васкатăп. «Темиçе хут ан калаттар! Пурпĕр внлме памастăп»,— тет. Эпĕ çаплах утатăп. Ĕнтĕ ÇЬфан та инçе мар. «Виççĕмĕш хут калатăп. Хальхинче те итлемесен...» Темиçе утăм çеç юлнăччĕ. Чупса çитме кĕске самант кăна кирлĕ. Сасартăк мăйран çав тери хыттăн пă-

чăртарĕ. Куç хуралса килчĕ. Сывлăш пӗтĕрĕннипе çсре тĕшĕрĕлсе антăм... «Каларăм вĕт вилме памастăп тесе,— илтрĕм тăна ксрсе куçа уçсанах.— Нихăçан та ан хирĕл манпа. Пурпĕрех эсĕ шутланă пск пулмасть».

Николай Михайлович хуллси ӳсĕрсе илчĕ.

— Малтанхи вăхăтра Марине кашни кунах пырса çӳрерĕ. Лайăх, йĕркеллĕ пациентка пулчĕ вăл. Пĕрре те пăшăрхантармарĕ. Хушсан, пĕр хирĕçлемесĕр итлерĕ, ыйтнине пурне те каланă пекех туса пычĕ. Хуллен-хуллен хăнăхрĕ, вăтаима пăрахрĕ. Виçĕ çул хушши ăшра пытарса усранă хуйха-суйха пĕр пытармасăр каласа пама тӳр килпи те хĕре чылаях лăплантарчĕ пулас. Икĕ эрнерен Марине ыйхи йĕркеленчĕ терс, эмслсĕрех çывăрма пуçларĕ.

— Шухăша ăна ăшра пĕччен йăтса çӳреме кансĕр çав,— каллех сăмах хушрĕ Варук аппа.— Савăнмаллп пулсан та, çын патне каятăн, йывăр хуйхă черепе çунтарнă чух та кама та пулин каласа парас килет. Унсăрăн ăш лăплан* масть.

Таçта йытă вĕрсе ячĕ. йывăççем хушшипе çывăхраиах вăрман хуралçн иртсе кайрĕ. Ку калава кĕске вăхăта татрĕ.

— Николай Михайлович, итлетпĕр,— спстерчĕ Таня.

— Марине чылай лăпланчĕ, хăюлланчĕ терĕм-çке. Çавăнпа эпĕ унран тӳррĕнех ыйтма шутларăм,— Николай Михайлович хуллен йăлкăшса илчĕ.

— Марина, тетĕп, эсир унпа... çывăх пулнă-и?

Калама кăмăлĕ пулман пулсан, эпĕ, паллах, çние тăрсах ыйтмастăмччĕ ĕнтĕ, анчах хĕр манрап çакпа та пытарас темерĕ пулас.

— Каç пулсан, вăл ман çума выртать. Ыталать, чуптăвать, ачашлать.

— Эсир мĕнле... чăннипех туятăр-и вăл ачашланине?

— Сăмахпа каласа пама йывăр ăна... Вăркăшса кĕрекен ăшă çил пăчăхнă шăмшака уçăлтарать-çке... Вăл ачашлани те çавăн евĕрлĕ... Тутана, пит-куçа перĕнет, кĕлетке тăрăх чупса каять. Питĕ лайăх, савăк туйăм. Пĕтĕм кĕлетке-çурăма уçăлтарса, çăмăллатса ярать...

— Май çинчен калаçатăр-и? Мĕн тет?

Марине пуçне усрĕ те нимĕн те шарламарĕ.

— Вăрçать, темтепĕр калать пулĕ ĕнтĕ. Çапла-и? Ма чсниестĕн?

— Çук, тăрăхлать вăл сирĕнтен,— терĕ хĕр шăппăн.— «Сӳпелтп, мухтанчăк»,— тет. «Кала эсĕ ăна, ахалех тĕрмешет, халĕ сана манрап никам та туртса илеймест»,— тет.

Николай Михаилович кпчеммси кулса илчĕ.

— Усал сывлăш çеç пулин те, ман ĕçе çапла хак Панине итлеме кăмăллах пулмарĕ,— терĕ вăл.

— Эсĕ, Марина, мĕнле?.. Эсĕ те çавнашкалах шухăшлатăн-н ман çинчен? — ыитрăм эпĕ çакна нлтсен, хĕре куçран тннкерсе пăхса.

— Эпĕ-и? — тĕлĕниппе хĕр куç харшийĕссм самантрах çӳлелле ывтăнчĕç.— Эпĕ çавăп пек шухăщлатăп-й?... Мĕншĕн апла ыйтатăр? — хумханса каларĕ вăл.

Эпĕ çăмăллăи сывласа ятăм.

«Апла кулать манран вĕреçĕлен? Шнклспме шухăшламасть те. Вăйлă пулас, шуйттан йăхĕ. Анчах эпĕ те нмшеркке мар... Çапăçу тип кăпа пуçланнă-ха»,— çапла хама хам хавхалантарса илтĕм те тăшманпа уççăнах тытăçса плме хатĕрлентĕм.

Йывăр ннкеке пула сакăр çул çсç вĕреннĕ пулин те, Марине пайтах вуланă. Кĕпекесене юрататъ, нумай япалапа интересленет. Эпĕ ăиа гипноз çннчен, хăшпĕр чух пуç мими çын шухăшпе улăштарса, ёнепме йывăр тĕрлĕ мыскарасем кăтартма пултарни çпнчеп каласа кăтартрăм. В. Леви, А. Васильев профессор кĕнекисене вуласа пăхма патăм.

— Марина,— ыйтрăм çак калаçусем хыççăп пĕррехинче,— пивушлĕ çав сасса эсĕ халĕ те леш тĕнчереп кплнĕ усал вăй тесе шутлатăн?

— Зсир вара ĕпенместĕр-и? — ыйтрĕ вăл, мап çпие сăнаса пăхса.

— Ёнеиместĕп,— çирĕппĕн каласа хутăм эпс.— Кĕнекесем вуласа та психика фокусĕсене ăнлаиса иленмерĕн-и вара?

— Эснр манăн та шухăш улшăнпă, çавăнпа сасă илтекен пулнă тесшĕн-и? Хавaслансах ĕненĕттĕм, анчах...

— Мĕн аичах?..

Марине йывăррăп сывласа ячĕ.

— Итлĕр эпппн... Вăл камнс-мĕпнс, ăçтан тупăппнпе эпĕ пĕлместĕп,— тсрĕ вăл, пуçне салхуллăн усса.— Апчах çав сасă май улшăпнă шухăш мар. Çук. Мĕншĕн апла шутлатăп тесе ыйтасшăн халĕ эсир... Эпĕ кĕнекесем вулама юрататăп. Чылай вуланă. Анчах çав сасă мапран икĕ хут ытларах пĕлет. Вăл маиа час-часах эпĕ халиччен илтмен, пĕлмен япаласем çинчен каласа парать. Аçтан мап пăсăлнă шухăш пултăр вăл апла?.. Пĕрре çапла чей ĕçме лартăмăр...

— Мĕн! — ыйтрăм эпĕ тăруках пĕтĕм кĕлеткепс малалла ӳпĕнсе.

Çав таçтн çăва патенчен кнлие шуйттан йахĕ хайне ялэпах чăн-чăн çын евĕр тыткалани çинчем тĕлĕнмесĕр итлеме хăнăхрăм пулин те, хальхнnче хама лăпкăн тытма пултараймарăм. Вăт усал сывлăш те ăна! Апла вăл, çĕр çпычи мĕнпур чĕрĕ чун пекех, ĕçет те, çиет те!

— Çапла,— терĕ Марине, салхуллăн кулса.— Унсăр сĕтел хушшине ларсан, çнлленет. Чĕнмелле, ăна валли сават-сапа лартмалла... Пĕрре чей ĕçме лартăмăр... «Тутлă мар,— терĕ вăл кăмăлсăр сасăпа.— Супăнь шăрши кĕрет. Мĕншĕн чей банкине эсĕ уçă тăрататăн? Ма супăньпе юнашар лартатăн? Нивушлĕ халиччен те чей, тĕрлĕ шăрша туртса илсе, тутине çухатнине пĕлместĕн? Хĕрарăм вĕт эсĕ»,— терĕ. Эпĕ, чăнах та, вăл каличчеп, илтмен те, пĕлмен те ун çинчен,— терĕ Марине, ман çине айăплăн пăхкаласа.— Тепĕр тĕслĕх... Пĕрре хур какайĕ çиес килсе кайрĕ. «Пăх-ха чŭречерен»,— тет. Уçрăм та... хур тăрать! «Атя пусатпăр»,— тет. Эпĕ килĕшмерĕм. Вăл вара сăмах майăн Гавай утравĕнче пурăнакан нене текен тĕнчери чи пысăк хур çинчен каласа кăтартрĕ. Каллех кун çипчен никамран та илтмен, ниçта та вуламан эпĕ. Темĕн чухлĕ çавăн пек тĕслĕх.

— Çак хыпар мана шухăшламаллипех шухăшлаттарчĕ,— терĕ Николай Михайлович, каллех хуллен ŭсĕрсе илсе.— Тŭррĕн тапăнса çĕнтеретĕп тени пурнăçа кĕмерĕ. Чее тăшман атакăна çăмăллăнах сирсе ывăтрĕ. Апла урăхла май шырас пулать...

— Марина,— терĕм эпĕ хĕре çакăн хыççăн,— тĕл пуласчĕ мапăн унпа. Калаçмалли, ыйтса пĕлмелли пур. Мĕн вăхăтра, хăш вырăна пымаллине хăй калатăр. Эпĕ малтанах пурнnпе те килĕшетĕп.

Ответне интересленсех кететĕп. Мĕн тейĕ-ши? Аçта тĕл пулма сĕнĕ? Сĕм-çĕрле масар çине пыма хушĕ-ши? Е пĕрпĕр никам пурăнман тĕттĕм, пушă пŭрте чĕнĕ?

Анчах пăлханни ахалех пулчĕ. Вĕреçĕленĕн курнăçма кăмăлĕ пулмарĕ. Манăн унпа калаçмалли çук. Çавăппа тĕл пулма та кирлĕ мар теме хушнă вăл Марнпеие.

Чее шуйттан йăхĕ. Тупса калама пĕлет. Анчах эпĕ парăнмастăп-ха, тэтах атакăлатăп.

— Марина, эсĕ унран вал камне е мĕнне нихăçэн та ыптман-и?

— Çук,— пусне сулкаларĕ хĕр.

— Пĕлме интереслĕ вĕт. Мĕн тейĕ-ши,— тетĕп хере.

— Купсăр пуçне,— Николай Михайлович чеен кулкаласа илчĕ,— эпĕ унăн пĕлĕвне тĕрĕслеме шут тытрăм. Сахал сын пĕлекен пĕр-пĕр пăтăрмах ыйту парсаи... Мана

çав вăхăтра Реклингаузен чирĕ* интереслентеретчĕ. Вара çав чир пирки Маринене вĕреçĕленрен ыйтса пĕлме хушрăм.

Тепĕр кунне Марине ответ илсе килчĕ.

«Эпĕ камне пĕлесшĕн пулсан, кала: мана врачсем нерва теççĕ, анчах эпĕ—пурпĕрех эпĕ.,.Чир пирки академнксенчен, профессорсенчен ыйттăр. Ана, ялта ĕçлекен врача, вĕсенчен нумай пĕлме кирлĕ мар»,— çапла калама хушнй мана хайхи усал-тĕсел.

— Интереслĕ вĕт? — шурй шйлĕсене кйтартса, хаваслйп кулса илчĕ Николай Михайлович,— лаййхрах, йслйрах калаймйн... Анчах асйрхарйр пуле. Вĕреçĕлен халĕ мана сӳпĕлти, мухтанчйк тесе кӳрентермест. Эпĕ ыйтнине хисеплет, ответ парать. Тен, кăштах шикленет те... Апла пулин те, хĕртеп хйпма шутламасть-ха. Унччепхи пекех час-часах пĕрле. Калаçать, ййпатать, юнать, ачашлать. Мана та чйрмантарма пихать.

Пĕрре кабинета сестра пйлханса чупса пычĕ.

— Николай Михайлович, укол тйваймастйп,— терĕ вал.— Венйри юн шприцра курйнсанах çывйрса ларать. Миçе çул ĕçлетĕп — кун пеккине курман. Мĕнле япала вара вал? Аптранипе тата икĕ сестрана чĕнтĕм. Вĕсем те ннмĕп тйваймаççĕ.

Эпĕ процедура пӳлĕмне кĕтĕм. Маринене глюкоза яма тĕрмешеççĕ иккен. Асапланса пĕтнĕ пурте. Хер ман сине йăлăнса пйхрĕ. Шурса кайнй хăй, йывăррăн сывлать.

— Николай Михайлович,— хумханса пйшйлтатрĕ Марине хйлхаран.— Вйл каллех кунта. Пуç вĕçĕнчех тйрать. Укол тутарма килĕшместĕп тесе калама хушать...

Эпĕ, пукан илсе, пациентка сывйхне лартйм.

— Марина, лйплан,— терем, аллинчен хуллен сйтйрса.— Тйтйр, тйрас килет пулсан. Эсĕ пĕлетĕн вĕт, эпир унпа пĕр-пĕрне яланах йнланнй, иихйçан та хнрĕсмен. Халĕ те калаçса татйлатпйр. Шухйшлать те акй, килĕшет, чармасть... Ывйнтйн-и? Кан кйштах...

Хĕр ерипен лйпланчĕ. йĕркеллех сывлама пуçларĕ. Сйнĕ-пичĕ те çуталчĕ. Калаçма чарйимасйр, эпĕ йĕппе Бенина тнртĕм... Юн улшйнмарĕ. Хĕр çймйллйн сывласа ячĕ. Май çине пăхакан куççем йшйнса çемçелчĕç. Кĕтмен çĕртен алла ярса тытрĕ те тутп сумме пйчйртарĕ. Ку асапрап çйлнăшйи, хйратакан вйя итлеттерме пултарнйшйн тав туни пулчĕ пулас...

* Сайра тĕл пулакан шăмă чирĕ. Чирлĕ çыннăн патраклашш шăммисем кăшт хускалнипсх с çăмăл япала çйклстшпсх хуçăла-хуçала каяççĕ.

— Лариса Григорьевна — пирĕн чи лайăх сестра,— терем эпĕ çирĕп сасăпа, çумрах таракан шурă халатлă хĕрарăм енне пуçа сĕлтсе.— Нумайранпа ĕçлет. Хăй ĕçне манран та лайăхрах пĕлет. Глюкозăпа укол туни сап сывлăхпа çпрĕплстет кăна. Çавăппа тек чăрмаптаракап пулмĕ тетĕп...

Çак кунран вĕреçĕлен парăнчĕ. Унчченхи вăй-хăватне çухатрĕ вăл. Халĕ ёнтĕ ăна хуса яма йывăр мар. Хĕпĕртенипе мапăн кăшкăрас, юрлас, ташлас килсе кайрĕ. Çапла хавасланса, кабинета таврăнтăм,— тăсрĕ Николай Михайлович калавне.— Чăнах та, савăпни ахаль пулмарĕ. Çак кунран усал сывлăш тек сĕмсĕрленме хăяймарĕ, йăвашланса начарлансах пычĕ. Марине унран хăрама пăрахрĕ. Юлашки вăхăтра эрнере пĕр-пкĕ хут кăна кĕрсе тухакан пулчĕ. «Тата мĕн чул пурăнмалла-ши? Киле каяс килет-çке»,— текелеме пуçларĕ.

— Тăхта. Халĕ нумай кĕтмелле мар ёнтĕ,— лăплантаратăп хĕре кашнинчех, хам ăшра вара вĕреçĕлеипе кӳлешетĕп: «Намăссăр эсĕ. Кĕççе пит. Икĕ уйăх хушши кашни кун хăвалатăп сана. Хăçанччен çапла сĕмсĕрленсе пурăнас тетĕн-ха?»

Темен чухлĕ хнрĕлчĕ пулин те, юлашкинчен, пурпĕр тухса сĕтĕрĕнме тиврĕ ăна. Апчах шуйттан нăхĕ темерĕн! Тухса тасалпччен ман савăнаçа кĕске вăхăта та пулин пăсрĕ-пăсрех... Çав кун Марине май кабинета ирех кĕчĕ.

— Ну, мĕнле? Халĕ те нлтĕнет-и? — ыптатăп хĕртен.

— Николай Михайлович,— терĕ вал, ман сине унчченхи пекех шикленсе пăхса.— Икĕ сасă. Иккĕн калаççĕ.

Тĕлĕнпипе, хăраннпе эпĕ кăшт çеç пукан çинчен персе аимарăм. Ак тамаша! Вăт кĕтмен япала! Нивушлĕ çакăн чухлĕ тăрăшни ахалех пулчĕ? Пĕрреччĕ, халĕ пккĕ...

— Ăçтан килсе çакланчĕ вара вăл? Хăçантанпа? — ыйтрăм эпĕ, çав тери ывăннине туйса.

— Паян иртенпех. Сакăр сехете укола килмелле. «Ан кай, çитет çӳресе»,— тет. Унтан тепĕр сасă нлтетĕп. «Врач хушнпне тăвас пулать. Тăр хăвăртрах. Пуçтарăн, кай»,— тет. Килĕштермеççĕ пĕрне-пĕри. Икксмĕш сасă вĕçĕмсĕр пĕрремĕшне хирĕç... Кам сасси-ши вăл? — хĕр ман сине тинкерсе пăхрĕ.

Эпĕ тăруках тавçăрса илтĕм те хавасланса кайрăм.

— 'Манăн сасă вал, Марина!

— Сирен? — тĕлĕнчĕ хĕр.— Мĕнле майпа илтĕнме пултарать вал мапа?

Сĕтел суптăхĕнчен кĕиеке кăларса, эпĕ ăна хĕр умне хутăм. Кнрлĕ пулма пултарĕ тесе, пĕркунах илсе килнĕччĕ.

— Вула-ха...

— Л. Васильев. «Внушение на расстоянии»,— тутине хускатса, çурма сасăпа вуласа тухрĕ хĕр, унтан каллех мана куçрап тнпкерчĕ.

— Мĕншĕн тĕлĕнетĕн? Эпĕ куиĕн-çĕрĕн сана сыватассп Çйнчен шутланипе пĕлетĕн вĕт... Анлапатăн-и халĕ?

Марине, шухăша кайса, тăруках чĕнмерĕ.

— Çаплах пулĕ,— кнлĕшрĕ вăл юлашкинчен.— Урăх кам сасси хирĕçлетĕр ĕнтĕ ăна?.. Нумая пырать-и вăл, сирен сасă?

— Пĕрремĕш сасă шăпланпччен. Вара çухалать...

— Вăт çапла,— вĕçлерĕ Николай Михайлович калавне.— Ку юлашки татăклă çапăçу пулчĕ. Тарчĕ усал. Вăй çитерейменĕ наукăпа кĕрешме.

— Пурăнать-и вăл халĕ? — ыйтрĕ Таня. Хăй кăмпа пуçтарса вараланнă аллпне çулçăсем çинчеп шăпăртатса юхакан шултра тумламсемпе çуса тасатрĕ.

— Ырах, сывах. Колхозра бухгалтерта ĕçлет. Качча кайнă. Икĕ ача ÿстерет.

— Чнм-ха... Эсĕ ăна хăлхасăр терĕн мар-и? — калаçăва хутшăнчĕ Варук аппа.

— Çав инкекрен те пулăшрăмăр,— хуравларĕ профессор.— Сывалса кайсан, уйăх пртрĕ-и, иртмерĕ-и, Марине каллех пычĕ. «Хăлхапа юсасчĕ»,— тет. Эпĕ Хусана хама вĕрентнĕ преподаватель патне çырса ятăм. Хăлхв чирĕпе ĕçлетчĕ. Илсе килĕр тесе пĕлтерчĕ. Аппăшĕпе канрĕç. «Сыватма май çук. Илтÿ нервисем пĕтĕмпех юрăхсăра тухнă. Анчах инкекрен пулăшма пулать. Юлашки вăхăтра çавăн пек аманса юлнисем валли аппаратсем кăларма пуçларĕç»,— тесе çырса ячĕ. Кĕçех аппаратне те илтĕмĕр. Пĕчĕкскер кăна. Çÿç айне пытарса лартать те курăнмасть...

— Чим-ха, Николай Михалч,— хыпкаланчĕ Варук аппа.— Тем, ăнлансах çитерейменĕм-çке. Вăл вара, Марине текенни, сан патна чнрлесе пынă-и? Эсĕ вĕреçĕлеп ернĕ терĕн мар-и?

— Тен, кăна Тапя ăнлаптарса паре? — ыйтрĕ Николай Михайлович, çаплах аллине çуса тасатакан хĕр çине пăхса.— Шăп çавăи евĕр тĕрлĕ усал-тĕселпе çапăçакан врач пулма ĕмĕтленет вал.

Таня хаваслăн кулса ячĕ.

— Психологи вĕренетĕр пулĕ-ха?

— Вĕреннĕ. «Пиллĕк» илиĕ-ха унпа,-— терĕ хĕр.

— Вăт-вăт. Каласа пар. Аилантар.

Хĕр йĕпеннĕ аллисене силлесе илчĕ те кĕсйинчен шурă тутăр кăларса типĕтрĕ.

— Мёншён Марине çумне çавăн пек чир çулăхпă-ха?— терĕ хĕр, сурчăкне лăнкăрт çăтса.— Чи малтан çак ыйтăва çутатса памалла пуле тетёп... Ман шутпа, акă мёншён... Пĕррсмĕшĕ, Маринене хăлхасăр пулни çапса хуçнă. Вунпилĕк çулта чăлах, мёскĕн çынсен шутне кĕрсе юлнине ăнланнп — калама çук йывăр хуйхă. Шухăшлăр-ха эспр: пурнăç тин çеç пуçланать. Умра темĕн чухлĕ çутă ёмĕт. Шкул, хаваслă тантăшсем, вăйă-кулă. Юратнă каччп те пулнă-и, тем. Вĕренме те ёмĕтленнĕ пулё. Сасартăк çак çутă хаваслăх, хăнăхнă пурнăç, хаклă ĕмĕтсем — мĕн пуррн пĕтĕмпсх ишĕлет, арканать, пĕтет. Иывăр ун пеккине тӳссе ирттсрме... Ухмаха тухма пулать... Уптан амăшĕ вилет. Пĕртен-пĕр çывăх çын... Хуйхă-суйхă тата тарăнланать... Умра нимĕнле шанчăк та çук. Пĕр-пĕччен тăрса юлнă хăлхасăр хĕр... Çав вĕçĕмсĕр тăсăлакан йывăр хуйхăпа... ну, мĕнле каламалла ĕнтĕ,— кирлĕ сăмах тупанмасăр, Таня шĕвĕр пӳрнине сывлăшра çавăрса илчĕ,— хуйхăпа... ну, ывăннă е пусăрăннă тейĕпĕр, пуç мими çынна сывлăха çнекен йывăр щухăшран хăтарма хăтланать, пурнăçа унччен хăпăхнă йĕркепе янă пек тăвать.

— Пуç мими çавăн пек хăтланать-и вара? Ай тур-тур!— тсрĕ Варук аппа.

— Çапла, пуç мнмн, — çирĕплетрĕ сăмахне Таня.— Марине хăлхасăр — плтмест, акă вăл сасă илтме тытăнать; пĕр-пĕччен, туисăхлать, ăна çывăх тус кирлё — акă сана çывăх тус. Вăл калаçать, йăпатать, пёрле пурăнма сĕнет, пнкек-синкекрен сыхлать... Çапла вёт, Николай Михайлович? — ыйтрĕ Таня, йăл кулса.

— Тĕрёс. Маттур. Экзаменри пекех каласа патăн.

— Вара чăн-чăн вĕреçĕлен пулман-и вăл? — ыйтрĕ Варук аппа.

— Илтмерĕн-нм? Каларё вёт Таня, пуç мими çавăн пек пăтраш гарнă тесе,— хутшăнчĕ калаçăва Степан Иванович.

— Илтӳ галлюцинацийĕ, ăнланмалларах каласан, плтпĕ пек туйăннн теççĕ ун евĕр чире наукăра,— хушса хучĕ студентка, хăй пĕлнппе хăпартлапса.

— И-и, эпё чăпнппех вĕреçёлен çнычен каласа патăн тесе... Шалтах ĕненсе лартрăм,— кулчĕ Варук аппа.— Апла шухăш пăсăлни çеç пулчĕ-п?

— Тĕрĕс,— хавхаланчĕ Таня.— Тĕттĕм халăх ёлĕк, паллах, çавна пёлмен, пёлме те пултарайман.

— Э-э-э, пăхăр-ха, çанталăк çуталса килет. Пушă карçинккасемпе ярас мар тет апла пире киле,— терĕ Ннколай Михайлович, тăруках хавасланнă сасăпа.

— Вĕрсçĕлене ăна çĕрле пырать теççĕ те,— çаплах иккĕлеисс мăкăртатрĕ Варук аппа.

— Кама мĕп... Хăшне-пĕрне çĕрле тӳрех вырăп çине кĕрсе выртаканĕ кирлĕ, теприне,— шăлне йĕрчĕ тракторист.—Николай Михайлович, пĕр вырăна ăнланаймарăм,— профессор енне пуçне пăрчĕ вăл.— Çав сасă нервă кăпа пулсан, мĕнле майпа Марпнене халпччеп пĕлмен-нлтмеп япаласем çинчеп каласа пама пултарнă?

— Çав кунсенчех манăн Марине пурăиакап яла кайса кнлмелле пулчĕ. Халĕ пĕлместĕп, анчах çавăн чух унта лайăх библиотека пурччĕ. Юриех тĕрĕслерĕм. Питĕ нумай вуланă иккен вăл. Хăшпĕр кĕнекисене ннтересленсех пăхса тухрăм. Пĕринче чей çинчен çырнине тупрăм. Кăтартрăм та, тĕлĕнсех кайрĕ... Сасă хăйне каласа паиă япаласем çинчен вăл, паллах, вуланă, анчах е маннă, е астумасăр юлнă. Кайраи, кирлĕ вăхăтра, пуç мими пĕлтернĕ ун çинчен ăстăна. Хур пиркн те çавăн пекех. Куç тĕлне пулнă вăл, анчах ăиа Марине асăрхаман...

Çумăр чарăичĕ. Аялтанах шуса иртекен йывăр йĕпе нĕлĕтсем, темрен хăрапă пек, тăруках çӳлелле çĕкленчĕç, сайраланса çуталчĕç. Лачакаланнă çĕр çпйĕн ăшă çил вăркăшса иртрĕ, йĕри-тавра хупăрласа илнĕ тĕксĕм çумăр çивиттине лăскама тытăнчс, пĕр шеллемесĕр çура-çура ячĕ, унтан, нумай татăксем çине пайласа, тӳпе çийĕн хăвалэса салатрĕ. Хитре пурçăн пек йăлкăшакан кăн-кăвак пĕлĕт çинче йăлтăр хĕвел ялкăшса пăхрĕ.

Салхуллăн тĕлĕрекен тавралăх вăранчĕ. Р1ывăç тăррнсем, хаваслăн шавласа, унталла-кунталла сулкаланчсç, çулçăсем çине пухăннă çумăр шывне шăпăр та шăпăр тăкрĕç. Ыраш пучахĕсем, пĕр-пĕрин çумне сĕртĕнсе, тем çинчен хуллеп пăшăлтатса калаçрĕç.

— Эх, лайăх та! — терĕ Варук аппа, йĕри-тавра пăхкаласа.

— Кун пек пулсан, ыран хире тухатпăр,— хаваслăн сасă пачĕ тракторист.

— Ну, тепре çаврăнкаласа çӳрер-ха,— Варук аппа карçпнккине çĕклерĕ.— Яла кайсан каласа паратăп ĕптĕ эсĕ вĕреçĕлене мĕнле çĕнтерни çинчен. Халлĕхе сывă пулăр-ха. Пирĕн яла пырсан, ксрсе тухăр калаçса ларма.

— Сывă пулăр.

Кăмпа пуçтаракапсем вăрмана кĕрсе курăнми пулчсç.

Нестерова, З. А. Вĕреçĕлен : калав // Нестерова, З. А. Ылтăн пĕрчисем : повеçсемпе калавсем / З. А. Нестерова. – Шупашкар, 1991. – С. 240-255.